34-29

И. ДУМИЛИН

# ХУМСЕМ

## САВАСЕМ



ЧӐВАШСЕН
ПАТШАЛӐХ
ИЗДАТЕЛСТВИ
Шупашкар—1934

И. ДУМИЛИН

# ХУМСЕМ

САВАСЕМ

ЧӐВАШСЕН ПАТШАЛӐХ ИЗДАТЕЛСТВИ

ШУПАШКАР 1934

Ку сборник—автăрăн 1-мĕш утăмĕ. Автăр йерип вĕренсе пыраҫ. Вăл халăх творчĕствипе усă кур хăнăхаҫ. Хăшпĕр сăввисене вырăс поэчĕсенни йевĕр ҫырнă. Сборникре темăна тĕпренех ҫĕнсе илейм сăнлăхласа ҫитереймен вырăнсем те сисĕнеҫҫĕ. Вĕс автăр пурнăҫăн хăйпĕр йенĕсене хут тăрăх кă пĕлнинчен те килнĕ („Хумсем“ т. ы. т.) Чĕлхе тĕлĕшĕ чен чылай илемлĕ, йака ҫырнă вырăнсем пурри авт тăрăшса ĕҫленине поеҫи тĕлĕшпе ĕҫлеме пултарас палăртаҫ.

РЕДАКТĂРЕ

# Шупашкар сăввисенчен

*

Лăпкă ирхи сывлăша вăратса
Савăт сасси хĕрхенӳсĕр килет...
Çур кунĕсемшĕн чăпчакăр, таса
Йăлт усăлатĕ тăрă çамрăк пĕлĕт.

Стратосферă! Тĕпсĕр океан,
Саншăн етемлĕх таланчĕваскатĕ.
Саншăн хавас пирĕн йурă пайан,
Сан ăшăнта та сывлатĕ стратостат.

Ман хулара сывлăшра йероплан
„Вилĕм йăлли“ çавăратĕ хуçран хут...
Епĕр—професăрсем, епĕр йалан
Хаксăр хăравçăшăн пулнă йут.

Каç хупласан çĕршыва пуçĕпех,
Çурçĕр ӳксен çĕр çине пуç хĕрлĕ,
Пирĕн çĕршыв астроном куçĕпе
Çутă планетăсен хыççăн йĕрлет.

Ир шурӑмпуҫ вӑрансассӑн каллах
Сывлӑш тулли йурӑсем йавӑнаҫ.
Кунӗн-ҫӗрӗн сывлӑша ыталаҭ
Ҫил пек хисепсӗр ӗҫчен савӑнӑҫ.

Ҫӗнтерӳ анчах илем мӗн,
Чӑнлӑх ҫех хавас параҭ!
Ман умра ҫӗклем-ҫӗклемӗн
Ӗҫчен пурнӑҫ хӑпараҭ.

Аслати пек ҫирӗп сасӑ.
Ҫуралаҭ кунта тепре.
Урамра ҫӳрет хавассӑн
Ытлашши шухӑ апрел.

Каҫ пулсассӑн кичем уйӑх
Курӑнмашкӑн йӗрӗнет;
Ушкӑнри вӗҫӗмсӗр йурӑ
Утаҭ Аҭӑл хӗррине.

Йыхрав йевӗр ман сӑвва та
Ҫамрӑклӑх чӗнет тула.
Еп куратӑп, еп саватӑп
Пайанхи вӑййа-кулла.

Комсомол! Мана чӗнсеттӗн
Ӑмӑртмашкӑн пӗрмайах,
Ес ҫӗнтертӗн, ес ҫӗнтертӗн,—
Еп йепле йулам кайа?

Пултарас тӑк ӗҫлемешкӗн—
Йурлама та пултарам.
Ҫӗршыва ӑнса ӳсмешкӗн
Пулӑшам вӑй пур таран.

*

Ан тив, мана та Горсовет
Ҫитмен пирки хватир ан патăр;
Сăвă ҫырмашкăн пурпĕрех
Пайанлăха кĕтес тупатăп.

Ан тив, хулан хăш пӳрчĕсем
Ҫурхи, кунсемшĕн пулччĕр вата,
Нумай вăхăт лармĕҫ вĕсем,
Ҫĕнни лартмашкăн епĕр хатĕр!

Тăван хула! Тата мĕнчул
Кунсем иртеҫ тĕр, вăхăт ҫитĕ:
Кăнтăр йенчен ак чукунҫул
Килĕ пĕрремĕш аслати пек.

Тата ҫумлах ҫут Атăл та
Хăй ҫуттине ҫутса йарсассăн,
Ҫитес ăру сана йăлтах
Тытса ыталĕ ак хавассăн.

Сампа пайан, маншăн пулсан,
Хул ҫурăмсем ĕҫре ҫех пиҫчĕр;
Сывлăшра пултăр йероплан,
Хумсем тăрăх кĕрлетĕр глиҫҫĕр!

Кашни ирех тăван хула
Ту-ту! сасса йыхрав пек йатăр.
Ĕҫри хавас вăйпа-кулла
Еп пуринчен ытла саватăп.

*

Калас килсен, кирек мĕн калăр,
Анчах çыранлă лупашка
Плансен майпе çаврăнкаларĕ,
Çуратрĕ тепĕр Шупашкар.

Вăл—авалтан чăпталă карчăк—
Тумланчĕ тепĕр тумпала.
Вăл çĕнĕрен туртса кăларчĕ
Ман çирĕп çамрăк вăйхала.

Çурхи хула çуратрĕ йурă,
Епир нихçан илтмен йурра.
Ӳсен çуртсем пек пултарулăх.
Çав йурăра пиçсе тăрать.

Вăл çĕмĕрет пĕр хĕрхенӳсĕр
Пĕчченшĕн тунсăх шăплăха;
Ăна тăван—хаваслă ӳсĕм,
Ушкăнри ĕç ăна паха...

Унпа пĕрлех епир пĕр тапхăр
Хĕвел йулташ йăл пăхиччен,
Хĕвелпелен тек ăмăртатпăр—
Епир—нумаййăн, вăл—пĕччен...

Хĕвел кулать сăмах илесшĕн
Çамрăклăха хисеп тума...
Тăван хула та çамрăк йешĕл
Комсомол пек тухать ума!

# Аннене

Таçта, вăрман сăртпа хупланнă,
Таçта çырмалă вырăнта.—
Ес пайан унтах пурнатăн—
Ăçта çуралнă—çав йалтах.

Ăçта ӳсет йемйешĕл улăх,
Ăçта çырма йухат йалан,
Ăçта хаваслă вăйă-кулă,—
Ес çавăнтах пурнан пайан.

Каç пулат. Йалта выљаççĕ
Колхозăн çамрăк ачисем.
Сан та иртнишĕн шывланмаççĕ
Ху йевĕр ватă куçусем.

Пайан йала пырса кĕрсен те
Йалйыш улшăннă темĕнчул.
Манпа пĕр тантăшлă хĕрсем те
Качча кайса пĕтрĕçĕ пуљ.

Тахçан суха калекĕ акнă
Уйра пайан машин кĕрлет.
Ес кунсерен йĕрме пăрахнă—
Ĕçлен, кулан çынпа пĕрле.

Тăван колхоз хастар ертелĕ,
Бригадăсем тухмаç асран.
Ватти-вĕтти пурте телейлĕ,—
Пĕлеп, çыраççĕ колхозран.

Еп пĕлетĕп, есĕ вату
Ăшшăн, ачашшăн йаланах,
Йалан курма, савмашкăн хатĕр
Хăвăн йуратнă ывăлна.

Аннеçĕм, ан хурлан, ан макăр
Йалан мана асна илсен.
Пур хурлăха епир, пăх ака,
Ватса пыратпăр, çĕмĕрсе.

Йĕри-тавра çĕн хапрăк-савăт,
Совхоз-колхоз йĕри-тавра!—
Ачаранпах ман йуррăм çавă,
Çавсем тăван ман сăвăра.

Çитĕнӳсем кашнин пурах тăр
Хастарлă çамрăк ушкăнра;
Ман сăввăма ăста редактăр,
Савма пуçларĕ кăшт кăна.

Айăп тени манра та пур-тăр,
Вĕт унсăрăн ӳсмен никам.
Анчах епĕр, епĕр çех пурпĕр
Кив пурнăçа пытаракан.

Хальхи кунсемшĕн епĕр хатĕр
Йухтарма йуна-тара.—
Пурнăçран мĕнчул ыйтатпăр,
Пурнăç çавăнчул парать...

Ăçта вăрман сăртпа хупланнă,
Ăçта çырма йухать йалан.—
Ес пайан унта пурнатăн—
Ăçта ман сывлăш пур пайан.

*

Колхоз пахчи—улма пахчи йемйешӗл,
Пахча тулли чечек—ҫурхи илем.
Кунта чечек ӗрчет хаљхи кунсемшӗн,
Кунта иртни сайра аса килет.

Ҫурхи илем, ҫурхи вӗҫӗмсӗр йурӑ
Пахча тулли аран ҫех шӑнӑҫать.
Ӑҫтан тата ӑҫтан асилӗн урӑх,
Етем манман мӑйкӑч пек пурнӑҫа!

Ӗлӗк—турат чечек сӑхсан пиншерӗн,
Кулак-сӗлӗх ҫӑтнӑ ку пурлӑха.
Пахча йӗри-тавра шӑтнӑ имшеррӗн,
Шӑтнӑ куҫҫуљ чечекӗ—хурлӑхан.

Пахча тулли улма пиҫсен мӑнтарӑн,
Тӑшман ваљљи вӑрланӑ ҫил-вӑрӑ;
Шӑтнӑ кунта тӗттӗм кунсен тымарӗ—
Леш куланай туйи пекех вӑрӑм.

Вӗрлӗк хапха, ҫатан карта ӗречӗ,
Телейсӗр йал.—Ӑна манман пахча!
Чиркӳ, хура пӳрт, мӑкаҫей кӗлечӗ—
Унта вӑл пурӑннӑ тахҫан-тахҫан...

Анчах пайан ҫурхи йемйешӗл чатӑр,
Кашни турат ҫинех ҫаксан илем,
Колхоз ӗҫкунӗпе вӗри пахчамӑр
Иртни ҫинчен сайра аса илет.

Улма ӳсет бригадӑ йевӗр йышлӑн,
Хӗвел выљать, кулать ӑна савса;
Вӑл ҫамрӑк та ҫӗмӗрт ҫеҫки пек чыслӑ,
Вӑл хӗр йуратӑвӗ пекех таса.

Пайан тинех сӗмсӗр вӗлтрен-мӑйаншӑн
Ҫак ансӑр пахчара та ҫӗр хӗсӗк.
Кунта колхозникшӑн улма тӑк, маншӑн
Йемйешӗл рифмӑ йӑвӑҫҫи ӳсет.

*

Ҫак ҫутӑ пурнӑҫ ҫуркунне,
Ҫурқуннерен те йешӗл.
Кивви—куҫҫуль, хавас—ҫӗнни
Йулашки хут кӗрешӗр!

Ҫурхи хӗвел, кулсам часрах,
Ҫӗклен, пӗлӗт чаршавӗ.
Йепле илемлӗ колхозра
Ӗҫӗн мухтавлӑ шавӗ...

Ӗнер уйхир—асап, пӑйав,
Пайан—ӗҫлӗр те кулӑр.
Ӗнер уйхир—суха, мӑйан,
Пайан—йем-йешӗл тулӑ.

Ӗнер уйхир—хӗн кур пӗччен
Нихҫан курман пархатӑр.
Ӗнер илтеттӗмӗр—хреҫчен,
Пайан маттур бригадӑ.

Ҫурқуннерен кӗркуннеччен
Уйра ударник—паттӑр,
Акать, вырать, ҫапать, чӗнет
Ӗҫри машинӑ трактӑр.

Ӗҫре хӗрет йӑрансӑр хир
Тырпул нумай илесшӗн
Ҫу каҫиччен тата тӑри
Йурлать ак, мур илесшӗ!

Кунта çил тухтăр хăвăртрах,
Çăмăр ташлатăр вирлĕ.
Кунта хаваслă вăхăтра
Савăç сăмахĕ кирлĕ.

Кунта кăмăллă йантăрат
Урам хуçи-хут купăс.
Кахал кĕвви çех çук кунта.
Кахал çăварĕ хупă.

Кивви пĕтет, çĕнни шăтат
Пĕрмай, татти-сыпписĕр.
Кунта, кунран кун шăлăнат
Пур шăрăш-марăш ирсĕр.

Мускав сасси кĕрлет пĕрмай,
Авто чупат васкавлă.
Тахçан çухалнă маннă йал
Йантрат хула пек шавлă.

Колхозник пӳрчшĕн тахçанах
Хăйăчикки вĕт йутă;
Сăрлă сĕтел тавра çунат
Илйич лампи çапçутă.

Çук мар тумтир, çук мар тырри,—
Пайан колхозник тутă.
Çук мар пăрçа, кантăр-вăрри,
А выљăхсемшĕн утă...

Хыпар ăсти—йалти хаçат
Кашнишĕн пур, вула тăр...
Тахçан ăмсаннă пурнăçа
Пайан епĕр куратпăр...

Йантра, колхоз кěвви, йантра!
Сана савассăм килчě.
Кун пек хаваслă самантра
Кашни ман пек пулинччě.

Пěтěм илемлě йурăран
Итлинччěç çак йурра çех:
Йепле çěршыв йěри-тавра
Колхозниксем йурлаççě!..

Итле! Ман йурă вěр çěнě
Ěç кěввипе пěрлешě...
Вěт çакă пурнăç—çуркунне,
Çуркунерен те йешěл.

## Итем кевви

Çаранлăх—симěс-сарăллă,
Вăрман—шывран-шуртан...
Куллен тăсланкă алăлă
Сухаллă çил йуртат.

Çут кӳлě тěкěр йевěрлě
Хěвелшěн хěртěнет.
Кулаť-выљаť хěвелěмěр
Çырмалă çěртенех.

Çырма пит пысăк „çылăхлă":
Асаť, сикет, тěртет.
Кунсем çăп-çăмăл ыйăх пек
Васка-васка иртеç.

Кунсем кунпа выҫасшăнах
Сикеççĕ пĕлĕтре...
Уйăх кукри çур аршăнлă.
Йĕри-тавра тĕтре...

Шупка хĕрлĕ хĕвел тĕсĕ,
Килсем часрах, килсем!
Каллах йĕрсе пăхас теççĕ
Кĕрхи чăрсăр çилсем.

Ĕнер уйхир йемйешĕлччĕ,
Сипсимĕсчĕ уйхир;
Пайан ăна вырчĕ-шăлчĕ
Тирпейлĕ бригадир.

Тулли туллăн пучахĕсем
Уйран кĕчĕç веçех.
Пайан колхоз итем çинче
Машинă кĕвви çех.

Колхозник! Есĕ паттăр вĕт
Ĕçре тимлĕн тăрсан.
Вара машин трактăр та
Хытрах кĕрлетĕр сан.

Çапмассерен пăтпа-пăтпа
Тĕшлентĕр ырашĕ.
Епир вĕт çĕнĕ опытпа
Ĕçлетпĕр колхозшăн!

Бригадăпа-бригадăпа
Ĕçре хĕрсе çитсе.
Выҫатпăр та кулатпăр та
Канма вăхăт çитсен...

Шĕвет пĕлĕт—çил арăмĕ,
Виртлет вĕтĕ çăмăр...
Ăна-кăна пăхмарăмăр,
Ĕçе кар тухрăмăр.

Пайан колхозăн армийĕ
Веçех итем çинче.
Тырра çĕртсе хăварĕ-им
Кĕрхи çил айĕнче?—

Çирĕп хăнăхнă аллăмăр
Çĕклет хуçалăха;
Колхоз пĕрĕмĕш сарăмĕ—
Парне патшалăха.

Выља-выља, мускулăмăр,
Кăтарт кĕрхи вăйна...
Иртен ир акнă туллăмăр
Иртен ир çапăнат.

## ПИР ÇАПНИ

Тăмпăртăк, тăмпăртăк!
Тăппи-тăмпи тăмпăртăк.
Ăса варри пушансан
Пире çапма шăлтăртăк.

Çапăр, хĕрсем, хытăрах,
Тукмак кайтăр пуç урлах;
Тукмак ĕçĕ çакă вăл,
Тăмпăр-тăмпăр акă вăл.

Тăмпăртăк, тăмпăртăк!
Хĕрсем, лайăх пикенер.
Епĕр акă ĕçлетпĕр,
Колхоз пурнăç тăватпăр.

Атăр харăссăн тăрса
Çумлăн-çумлăн йунашар,
Хамăр тăван колхоза,
Пир çапса та пулăшар.

Атăр, атăр пикенер,
Çумлăраххăн тӳленер,
Тукмак ĕçĕ çак пултăр,
Колхоз ĕçĕ сыв пултăр!

## САВНИ, ТЕРĔМ*)

Савни, терĕм, савни, терĕм,
Савни, саватна, терĕм.—
Вăл, колхоза кĕр, терĕ,
Кĕмесессĕн—кай, терĕ.

Атте, терĕм, анне, терĕм
Колхоза кĕрер, терĕм.—
Атте кĕме сĕнмерĕ,
Анне хирĕç чĕнмерĕ...

Колхоз, терĕм, колхоз, терĕм
Унта кĕреппех, терĕм.
Зайавлени çыр, терĕç,
Пухăвала пыр, терĕç.

*) Ку сăвва колхоз çамрăкĕсен йуррисенчен илсе çырнă.

Пуху, терĕм, пуху, терĕм,
Илĕр колхоза, терĕм.
Чухăннине пĕлчĕçĕ,
Мана унта илчĕçĕ!

Атте, терĕм, савăн, терĕм,
Епĕр колхозра, терĕм,
Вăл аннене тапрĕ те,
Хĕнерĕ те, çапрĕ те.

Атте, терĕм, тăхта, терĕм,
Халь авалхи мар, терĕм.
Суда патăм аттене,
Ан хĕнетĕр аннене.

Совет, терĕм, сучĕ, терĕм,
Тĕрĕслехе туп, терĕм.
Сан аçăна, пĕл, терĕç,
Кулак илĕртнĕ, терĕç.

Кулак, терĕм, тĕп пул, терĕм,
Санпа кĕрешеп, терĕм.
Çынсем мана тĕрĕс, терĕç
Ана пĕтерес, терĕç...

Савни, терĕм, савни, терĕм,
Савни, саватна, терĕм.—
Вăл, еп санăн хĕр, терĕ,
Чĕремĕрсем—пĕр, терĕ!

# ЛАЙĂХ СĂВĂ*)

Публикă тулнă шутсăр, хисепсĕр,
Публикă тулнă,—тăвăр.
— Сăвăç йулташ, вулăр-ха есĕр
Çĕнĕреп çырнă сăвă.

Ну, ăçтан-ха чăтса хисеп памăн,
Ну, ăçтан-ха чăтатăн?
Хăш сăвва-ха вулас-ши манăн...
Тăнă хам, шухăшлатăп.

Публикă, чăн, итлемешкĕн хатĕр,
Хатĕр старик, ват карчăк...
„Йелчĕк" колхоз предçедателĕ
Мана хаçат тыттарчĕ...

Тухрăм, кăшкăртăм уççăн та пултлĕн
Тунсăх хăна пек çапрăм:
— Йулташсем!
Сирĕн колхоза Республик...
Хĕрлĕ хăми çине çапнă...

Публикă çил пек шавларĕ пĕр хут
Савăнăç йерчĕ те йерчĕ,
Вунă-вунпилĕк минут
Алă çупрĕ „Йелчĕк"

. . . . . . . . . . . . . .

Лайăх сăвă çак мар-ши кунта
Ĕçхалăх сават тĕк ăна пит хĕрӳ?
Еп пĕтĕм хаваслă факта йуратап,
Мĕншĕн тесессĕн—унта çĕнтерӳ!

*) В. Майаковски сăвви майлă

# Лайăх марш

Çамрăклăх чыслă. Ун йачĕ пĕрре.
Ун аслă ĕречĕ—комсомолĕс.
Çамрăксем, епĕр ĕçре çех хĕрер,
Пирĕн ĕçсем-и ăнăççăр пулĕç?!

Ĕç чĕнсен—алă пур кашни çĕртен,
Вĕçĕр тесессĕн—çунат пур.
Пурнăç чĕри ĕрĕхет-тĕр пирте,
Пурнăç хăвачĕ çунат пул.

Алăсем лайăх, сулмаклă, чăмăр.
Кам ĕçпĕн тўртĕм—хиретпĕр.
Парти ĕçĕсемшĕн хăпарнă кăмăл
Пур кăкăр тулли вĕт вĕрет вăл.

Йывăр килсен—чăмăртан тимлĕрех,
Савăнăç пултăр—йурлăпăр ирĕк.
Пĕр тункатăсăр пулас ĕмĕре
Епĕр ăнлантăмăр çирĕп.

Пирĕн вăйа шиклентермĕ тăвăл,
Пирĕн вăй иксĕлмĕ, чакмĕ.
Пур çамрăк ретрен, çĕнми рет—комсом
Сан ачусем анчах мĕн.

Кам пире хирĕç, кам найкăшаť—
Сирĕлĕр тĕк пек, çул парăр,
Анлăн тăрса çак хаваслă маршпа
Ут, комсомол пинлĕ çарĕ!

Пăхăр пайан çĕршыв çийĕнче,
Ĕç хуçисем епĕр мар-ши?
Лайăх йантра, пур аван маршсенчен
Чăн лайăх çамрăксен маршĕ!

# Прогул

Гудок кăшкăрат. Сехет ҫиччĕ ҫапнă.
Ҫуртсем хушшипе утăмлатăп цеха.
Ытти ҫын пекех мана йыхăрать мĕн,
Промфинпланăн пулҫĕ—сехет

Цеха ҫитиччен пĕр ҫĕрте ҫирĕм утăм
Ҫул та тап-такăр—шакла тротуар.
Анчах утăмсем ҫаврăнасшăн ман кутăн,
Прогул намăссишĕн Ҫул такăр мар.

Мана хирĕҫех премиленĕ ударник,—
Сывăх йулташ тăрать ман тĕле.
Ҫиллес кусĕсем,
Куллисем... таҫта тарнă,—
Мана сăмахсăрах пĕлет.

— Ак, вăл та кунта!
Урра! Хай прогулшчик
Пăхăр-ха намăс, намăс йепле?
Ман кив йăлапа пĕр ăна ăшăтасчĕ...
Анчах...хамăн айăп хамах тивĕҫлĕ.

Ман мĕн тийес?Ултавпа хăтăлаймăн.
Кĕретпĕр цеха. Кĕтеҫ станоксем.
Еп сисрĕм,
Прогул чĕрене кĕрсе кайнă,
Ўпкев ҫĕҫҫипе кăкăра витĕрсе.

Ĕç ак пуçланат. Чĕрере кăчăр-кăчăр
Намăс ĕçлет ик кун йулнă ĕçе.
Цехра тусанпа тар пĕрле. Цехра пăчă,
Цехра ĕç илемĕ вĕçет.

Еп те çынпа тан ĕçе тытăнтăм халĕ,
Кашни сасранах упкев илтиччен;
Станокăн кашни, кашни вĕтĕ деталĕ,
Мана хыт хăмсарчĕç мĕн пурĕ йенчен.

Станок—вăл мана çумри йулташ пек çе
Куллен илĕртетчĕ: Ĕçле, ан хăра.
Вăл ĕнер çех мана тăван пекчĕ,
Пайан ак тем пулнă—йалан хăтăрат.

Çумри тантăшсем часах сивĕнни те,
Пĕр куншăн каларĕç:—Ес йут!..
Чăтса тăраймарăм, кармашрăм сенĕк пек
Станок ыталанчĕ пĕр хут.

Чăтса тăраймарăм туслашрĕ ĕç çарĕ.
Кашни йулташран, кашни станокран:
— Пĕр айăп, йулташ, пĕр айăп,
Каçарăр,—тесе тилмĕрессĕм килчĕ ма

Гудок пуличчен хĕрелчĕ ĕç ларчĕк, хĕрч
Шавларĕ. Çутăлчĕ тул...
Етем намăсне тĕппипех ăнлантарчĕ,
Çав йурăхсăр сасă—прогул.

# ПИРЁН ГЕРОЙ

Пайан кама тивĕç çакă страницă?
Кăкăр тулли сасăпа тулхăрса,
Пайан çĕршыври пур ударник-ударницă
Геройлăх пирки хăвăртлаççĕ сасса.

Нумайĕш пĕлетпĕр кам „чысĕ“, кам йачĕ
Пĕр пек ларса йулнă историсенче.
Хăшсем ытлашши, тен, сăмах сайа йачĕç
Герой-сволăчсем çинчен.

Ак итлĕр:
...Йем-йешĕл кăтра улăхра
Пуйан та чаплă пурнат Урха...
Тата:
„Тулта мухтанат Михетер—“
(Ĕнтĕ тарçисемшĕн хĕпĕртет-тĕр!)

Çапла геройсем, пур геройлăх сăпачĕ,
Тата çаратса çех ĕçчен халăха,
Астăватри,
Йепле йатне сарса йачĕ бандит Каљукав!

Герой... Тарăхса пур мускул пĕçеретĕ,
Йййе пек тухаççĕ тарсем çурăмра.
Ун пек йатсене хаљ веçех вĕçеретпĕр
Хамăр çумран.

Урха йачĕсем çăва тĕпне кайччĕр—
Вĕсемшĕн çырмаст тек пирĕн перо.
Пирĕн герой вăл—çĕршыв сăнсăпачĕ,
Ударник йатлă герой!..

*

Пăхсан—çамрăк каччă
        хăт епĕ, хăт есĕ,
Манран та, санран та пĕр уйрăм та çу
Йатне те калам-ха пĕр именмесĕр:
Трактăрис Кĕçтук!

Пĕлместĕп, ăçта сăрхăнса унăн терчĕ,
Унăн асап курнисем темĕн чул,
Пĕлеп ун çинчен—
        Кĕçтука çитĕнтерчĕ
Халĕхи йулашки пилĕк çул.

Вунсакăр çулта ăна пирĕн тапхăр
Кĕтӳç пушшинчен салтăнтарчĕ кĕçех;
Социалисăм уйхирĕн агитатăрĕ—тракт
Ăна вăрхăнтарчĕ ударлă ĕçе.

Ĕçлет...
    Ак вăл—герой!
    Урха тек ан култăр.
Кĕçтукшăн трактăр—хурçă йăва.
Хушаççĕ—васка, сухала пĕр вунулт
Кĕçтук вунсаккăр-вунтăххăр сăват.

Ача сиктĕрми пек çирĕп мускуллă
Кĕçтукăн аллийĕ чăн кĕрешӳре.
Машин хапине те, тăшманăн, ан çулăх-
Кĕçтук машиншăн сыхă çӳрет...

Чăнах, вĕт пĕччен лĕх айванăн пăхатĕ
Вăл пирĕн темпа пусса çитеймест.
Çампа колхозри пĕрремĕш бригадă,
Кĕçтук бригадиршăн чисти еп-ес.

Колхоз тахçанах темпсене парăнтарнă,
Авал йулнисемшĕн пайан хăвăрглат̆.
Кĕçтук бригади планпа мĕнчул панă--
Куллен кăтартат̆ çĕр прочăн ытла.

Пирĕн кунсем мĕнпур лĕчĕр-лечĕр
Йунпах сынсене мухтамаççĕ темме.
Пурте пĕлетпĕр: ударник тивлечĕ
Ырхан йĕп çăрти пек—кахал етемме...

Сулмаклă шăмшак, çурла пек ан ӳпĕн,
Ман пĕтĕм саспа кăшкăрассăм килет:
Ак çак, йулташсем, социализăм Кĕçт̆укĕ,
Лум пек хирекен пур амаклă тĕле.

Ак çак, йулташсем,
Çĕрпывшăн пĕр савăл,
Парти хисепшĕн куллен çунакан,
Плансем ĕлкĕртсе, ĕçри паттăрпа вăл
Кивве çуракан, ватакан...

. . . . . . . . . . . . . . . .

Кĕçт̇ук çинчен еп пайан пĕтеретĕп,
Пĕлеп: вĕсем йышлăн пирĕн ĕретсенче.
Мĕнчухлĕ вĕсен сăвва тивĕç ĕречĕ,
Сăва кĕреймен пайанхи кунччен.

Сăвăç йултаıпсем, Хушас килет манăн:
Ĕçе тытăнар-ха харăссăн, кар!
Вĕсем, Кĕçтуксем, пире хупăрланă
Çĕршер мар, пиншер, мĕлйунпар!

# Йурă*)

Асăнмалăх, тусăм, есĕ
Парса йар мана парне:
Тапак йенчĕк тĕрлемесĕр
Тата Пушкин сăввине.

Ак кăçал чĕнет мана та
Хам йуратнă хĕрлĕ çар.
Ес хăвăн тулли сăнна та.
Мана, тусăм, парса йар.

Ан хурлан, ан тăк куççулĕ,
Ан шурат хавас сăнна;
Хаваспа, тен, лайăх пулĕ
Çĕмĕрмешкĕн тăшмана.

Уйрăлу, теç, пысăк хурлăх,—
Манпăн мар ку кĕвĕсем.
Ну, çапах та пырса кур ес
Ăнсăртран асна илсен.

Тен, тăшман, хай урнă анчăк,
Вĕрлермешкĕн пултарат.
Ес унчух пырса савсамччĕ
Ман сивĕннĕ çамкаран.

Çăтмасассăн çавă вилĕм,
Тивмесен тăшман пуљљи,—
Паттăртан пĕри—ен килĕп,
Сана курăп куç тулли.

---

*) И. Уткинăнни пек.

## Шурилин

Çапла пуçланат
Ман ку сăввăн пуçламĕш:
Вăйран талпăнса
Хырчăклатăп сăвва.
Умри сăмаха
Уйран йевĕр уçлатăп,
Асанне сĕт сунă пек
Сăмаха сăвап.

Çĕршыв кăшкăрат:
Часрах пилĕкçуллăх,
Часрах тимĕр-тăмăр,
Чугун!
Часрах кунта нехтă
Прогул çине çулăм!
Парăр, вăрман,
Каучук!

Çĕршыв кăшкăрат:
Комбайнсем парăр,
Пойăссем,
Çул, машинсем!
Вăрлăхпала тулччĕр
Мĕн пур елеватăр,
Часрах ĕçе кĕччĕр
Пушă çĕрсем.

Çĕршыв кăшкăрат:
Совударниксем парăр
Ударник хăй—
Производствă чĕри...
Ман çĕршывра
Пур вĕсен пинлĕ çарĕ.—
Манăн геройăм—
Вĕсенчен пĕри.

...Сăмах вакланса
Купаланнă-çемĕн
Ел хам геройа
Калап акăйатран:
Çынри сăмахпа
Чысласассăн -Шурилин,
Йатпа—
Тимахви-Шатра.

Тахçан чеччерен,
Ачаранах шатралă,
Ăна чеччерен
Ыткăнтарнă чапа:
--- Шатра!--
Ун станок пайĕсем пек
Йк алă.
Пăхсан—етем мар,
Машинис çапах.

Пуф-пуф паровоз,
Паровоз—„Р—105“
Йурри тупăлха,
Кĕввийĕ—кĕсле.

Хуран-пасмана
Пăс пырçихиллĕ—
Çак хуранта
Тимахви ĕçлет.

Етем хушшинче
Кахалсем кивĕленнĕ.
Шурилиншăн паллă
Хастарлăх, тени.
Шпалсем тахçанах
Хатĕрленĕ,
Ленин çулне кăтартаť:
Наркомçул—Ентри[1]).

Кашни паровоз
Ăмăртушăн вăраннă,
Кашни кустăрма
Çаврăннийĕ—поход.
Сăнаť Тимахви:
Ăçта тормозăн кранĕ,
Хăçан пуçне каçăртаť çемафор.

Шатра куçĕсем—
Сахалран
Ик çут кантăк,
Ырсан-ырмасан та
Тухмаç йапăха;
Умри паровоз
Хыт урсан та,
Урмасан та
Инерци законĕн
Йăлине пăхаť.

[1]) Çулйĕр Наркомĕ—А. Андрейĕв йулташ.

Унри паровоз
Пăрăна-пăрăна çех,
Йĕп пек витĕрĕнет
Пур амаклă тĕле,
Мĕншĕн тесессĕн
Кашни вырăна вăл
Вăрă кушак пек
Сăнама пĕлет.

Куллен Тимахвин
Шатрисем палăрмаççĕ,
Пит-куçĕ тулать
Хура çуллă шыва;
Чĕнмест Тимахви—
Ĕçре чух калаçмасть вăл,
Машинă кашнишĕн
Çĕлĕкне хыватъ.

Хашкать паровоз
Ун сасси ăмăртуллă:
Ех, чашкăртăттăм
Хам вăйăма!
Сисет Тимахви:
У вăйĕ вутпа тулнă—
Ăна ирĕк йама
Вăйă мар.

Машин чашкăрать,
Унăн ăмăртнă сасă,
Кăшт çех ĕç тăрсан та
Вăл тулхăрать:
Асту, Тимахви,

Ман йата варласассăн
Çĕршыв умĕнче
Хам çинчен хырап!..

Машин ўкĕтлет—
Мана „Правда“ çиленнĕ,
Кайра еп,
Çампа та чĕнеп,
Мана тăхăнтартăр
Ударник йĕвенĕ,
Еп лучăркас çук
Хам çĕршыв чĕнне.

Хаскаў паровоз—
Унăн ĕçĕ
Хăйшĕн-им?
Вăл çынпăн васкаў
Социалисăм патне;
Куллен сийенсем те,
Куллен кун крушени
Çĕршывра варлаççĕ
Паровоз йатне...

Çĕршыв тăшмана
Пĕтермешкĕнех хăйрĕ,
Йуласшăн пулмарĕ
Тăшманăн кулли,—
Тăшман мĕлкисем
Муталаççĕ-ха шăйрăк,
Татах ĕрĕхесшĕн
Ăçта та пулин

Пурах çĕршывра
Леш сăтăрçăла ташă,
Машинă питне
Çĕлеççĕ кĕççе,
Апат выранне
Çĕклемпе тирĕк-чашăк,
Тумтир выранне—
Вăйăсем леçеç.

Пĕлет Тимахви:
Пушанман мăшкăл лаçĕ,
Çынна кăтартсах
Шăхăраççĕ кĕç,
Тăшман мĕлкисем
Шатрана кăтартаççĕ:
„Ĕçшĕн—ухмах,
Ухмахшăн—ĕç“

Çапах мĕлкесем—
Мĕлкесем çех, конешнă,
Вĕсем паровозшăн
Шăпшакăр кăвайт.
Хашкаť паровоз,
Шăхăраť вĕçкĕн поршĕн:
Контакт пар,
Давай!
Контакт пар,
Давай!

Шатра паровоз
Çулăмпа вĕри чунлă,
Вăл таталмасť

Парти хывнă йĕртен.
„Нумай—çухрамсем,
Сахалрах кăмрăк çунтăр!“—
Унтан... пĕлетри,
Тимахви мĕн тет;

Шатра тунсăхлат:
„Паровоз питĕ каннă,
Еççĕр. ăмăртусăр—
Сис—пурнăç ăнман“

. . . . . . . . . . .

Сампа çĕршывпех
Хаçатсем каварланнă:—
Шурилин ĕлкĕртнĕ
Промфинплан.

Çисмен çĕртенех
Хапхаран хăна килпĕн,
Уйав пек асса,
Пит хаваслăн кăна,
Чармак паллăсем
Сасă панă—
„Ш-у-р-и-л-и-н“—
Ăна хапăл тунă
Хĕрлĕ хăма.

Хăшсем ĕненмен,
Ун ĕçне курман тейĕн,
Ăçтан тавçаратăн тăрук?
Шатра-Шатра пуђ,
Тимахви-Тимахви пуђ,
Тата такам хушнă:
„Çуламан пăру“.

Хăма пĕлеймен—
Мĕнлескер ку Шурилин,
Анчах тапăртатнă
Такам сăмаххи:
— Ку пирĕн Шатра вĕт,
Ку пирĕн вĕт, пирĕн,
Ку пирĕн, герой
Тимахви!

Кĕтмен йапала!
Ха, кам асăрхана,
Ха кам-ха
Тавçарнă мура!
Давай—тăскалăр—
Тимахви çăмăл мамăк,
Çынсем, харăслатнă
— Урра!

Çумри паровоз
Чашкăртатнă: аўсемĕр,
Ак вăл ударник!
Ак вăл ĕçлет!
. . . . . . . . .
Тăраў Тимахви
Куçĕсем—çăлтăрсем пек,
Шатралнă пит
Пĕрлĕхен тĕслех.

Сăнаў Тимахви
Паровоз та шатралă,
Унăн та тумтирĕ—
Хăрăм та тусан,

Вăл кашнине
Хăйса парéччĕ алă—
Унăн çынсен пек
Аллисем пулсан..

Шпалсем кĕвĕлеç,
Йалан хăнăхнă кĕвĕ
„Р—105—ала,
Станци—такана,
Шатра Тимахви
Ĕçшĕн вĕçкĕн те
Кĕвĕç,
Пире ăсатать:
Архангĕлск—Канаш.

Вагон хĕпĕртет.
Шатра пĕччен çын-и?
Шатра хисепне
Мĕлйунăн кĕнĕ.
Çынна кулленех мĕн
Çывăх машинă,
Шатра паровозшăн
Йертекен тĕнĕл.

Çĕршывваскатса
Ăмăрту тапратать-и,
Йе пысăк задач
Хускатса лартать—
Вĕсем йывăр мар,
Шатрана çывăх—парти,
Хăй партишĕн шăп
Çывăх вăл Шатра.

# ТАПРАННĂ ÇУРÇĔР

1

Аслă Сойузăн кашни кĕтесĕ,
Кашни ытамсăр шывшурĕ, вăрманĕ
Пирĕн хала палламасăр, пĕлмесĕр
Стройкă вăйне астумасăр йулмарĕ:

Ĕлĕк амакнă, ваннă, вĕчесĕр
Сĕм кĕтессем те кивве ак пĕтерчĕç.
Аслă Сойузăн кашни кĕтесĕ
Ĕç чуппине вĕçĕмсĕр ĕрĕхтерчĕ.

Çивĕч йалавсăр вырăн çук урăх,
Сĕм кĕтессемшĕн каплĕх çук, ыйăх...
Сĕм кĕтессемшĕн карăн, ман йуррăм,
Йуррăма парăн, кансĕр стихийă!

2

Шурă тинĕс иккен хура хумлă;
Хумханатĕ мĕн йалан усал саслăп,
Хумĕсем ун шăваç çумлăн-çумлăн;
Çурçĕртен тек хайар çил тухсассăн
Шурă тинĕс иккен хура хумлă.

Çурçĕртен пĕр хайар çил тухсассăн.
Çул çине тухсан есĕ ан кай та,—
Сан çине сирпĕтет хумлă сасă
Хум пекех асса кайнă тайга та,
Çурçĕртен пĕр хайар çил тухсассăн.

Ахăрат, ахăрат сивĕ çурçĕр,
Кунран-кунваскаса вăл урат мĕн,
Кунран-кун тăкăнат тайга çуçĕ
Çурçĕртен хайар çил тухнă çемĕн
Ахăрат, ахăрат сивĕ çурçĕр!..

3

Йăлтах шапшур. Шур океан
Йăлтах йурпа, пăрпа хупланнă.
Унта-кунта вĕçсĕр çыран—
Вĕçсĕр пăрсем ларса капланнă.

Ниçта, ниçта та пурнăç çук.
Йăлтах пĕр йур та, пăр та, пĕлĕт.
Шыв çех çанталăк тикĕс чух
Кăвакарат мĕн тĕллĕн-тĕллĕн.

Çул çех пĕччен çӳрет. Çил çех
Кулат хăруш, йĕрет хаваслăн.
Çил çех пăрсемшĕн кĕвĕçет
Шавлат аслати саслă.

Вăхăт-вăхăт таçти хумла,
Саспа асса вăрăм хӳреллĕн,
Иртсе кайат кăшт туххăмра
Таçти Мускав хăни—пропеллĕр...

Кунта нумай кун пек кĕтес—
Етем алли пыман çĕр—лаçă.
Кунта етем ăсне кĕтеç,
Ĕçчен алсемшĕн тунсăхлаççĕ.

4

Мĕнле çанталăк!
Есĕр тен илтнĕ пулĕ
Çурçĕртен, йе ăш йенчен,
Йепле кунта етем кунçулĕ
Ĕмĕр иртет çĕр сиввинче?

Мĕнле çанталăк!
Есĕр пĕлетĕр пулĕ,
Йепле выртать
Ку çĕр пайан—
Улать çех çурçĕр урнă çилĕ,
Шавлать çех пăрлă океан!!

5

Пăх-ха, пăх! Кунта куратна,
Кунта вăл аслă шăннă хир!
Пайан кунтан ăна йуратрăм—
Мана вăл пачĕ пăлан тир;

Мана вăл пачĕ пысăк çĕлĕк,
Аш тир пĕркерĕ ман çийе,
—Пиншак çинчен тăхăн-ха кĕрĕк,—
Йăл кулчĕ ненцă самоед.

Пĕччен ларан пĕр çывăх йуртта
Пĕркенчĕ пăрлă шерепе.
Сивĕ пирки унта еп выртрăм,
Унта еп выртрăм кĕрĕкпех.

Пăх ха, пăх! Йепле йур урлă
Сиксе йуртаççĕ ик пăлан,
Çавăн çинчеччĕ манăн хурлăх,
Çавна курасшăнччĕ йалан.

Сан та ман та пĕр йевĕр сасă,
Пĕр йевĕр шут... Хĕр и, каччă-и—
Лартасчĕ те план тытсассăн
Йалта йарасчĕ катаччи...

Йе йĕлтĕрпе сăрт урлă çил пек
Вĕçсе пăхасчĕ ман атту,
Хыça хăварнă йĕлтĕр çипĕ
Пире йат паратчĕ—маттур!

Пăх-ха, пăх! Курар пĕр хушă
Пăлан ыванна ав хашкат.
Харей ăçта? Ăçта чĕн пушă!—
Пĕрре çапам еп чăвашла!

Шăннă хир! Куратна есĕ,
Манатна есĕ çак çĕре?
Ку çĕршыва тепре килсессĕн
Ăш тир пĕркет вăл çĕнĕрен...

6

Инкек иккен вăл çурçĕр цынгисем!
Ăçта сикет Таз шывĕн пырĕ—
Унта авал çухалнă Мангасей.
Ана картăсем çинче ан шырăр.

Ун ĕмĕрĕ—çын ĕмĕрĕ—çĕр çул,
Çĕр çул хула пулса та пĕтсе ларнă,
Унта авал кăткă пек темĕн чул
Мул хуçисем суту кăларнă.

Харам пырсем пăлан йунне ĕçсе
Порт ăçтине пĕрне-пĕри пытарнă.
Çампа хула пĕр хаксăр, тивĕççĕр,
Çулсен айне йулса çухалнă.

Хула аса килмен мĕн икçĕр çул...
Пайан анчах епĕр хаваслăн,
Унта хăват кĕртрĕмĕр темĕн чул—
Мангасей шавлат халь пирĕн саслăн...

7

Ирхи сивĕ çилпе пĕрле
Пире шăнтать.
Ударниксем, йĕлтĕрпеле
Тарар унтан.

Çилленчĕк çил пĕрмай чупать
Умран-хыçран.
Питсем улма пек, çул шалпар—
Часрах-часрах!

Пĕри. Тепри. Тата тепри
Йĕр йĕрлесе
Ывăнатпăр, тетпĕр-и,
Ударниксем?!

Каçпа станок пире кĕтет
Ăна сисер.
Кам, халтан еп карăм, тет--
Вăл пирĕнсĕр!

Станокпала, йĕлтĕрпеле
Чĕртер çула.
Вăйлă çирĕп строителсем
Епĕр пулар.

Вăрман, тайга, çырма-тĕме
Умра-хыçра,
Ăçта йĕлтĕр йĕрри кĕмен—
Часрах, часрах!

Пĕри. Тепри. Тата тепри
Йĕр йĕрлесе
Ывăнатпăр, тетпĕр-им,
Ударниксем?!

8

Шурă йĕрсем асамат пек хитре,
Çурçĕр шевли*) илемлĕ те чаплă.—
Уншăн лопарь тĕлĕнместь пĕлĕтрен,
Тунгусшăн та тин турăра мар хăватлăх.

Стройкă тени авала мантарать.
Стройкă тенийĕ пайан ĕçĕн ашшĕ.
Байкал аскăн хĕрĕ чарсăр Ангара,
Вăлта пайан хурçă тум тумланасшăн.

Сивĕ каçсем çăлтăртан пушанман,
Çурçĕр çĕрлех ĕçлеме сăмах панă!
Тинех пурнăçран ӳксе йулчĕ шаман,
Манăçа йулчĕ шаман барабанĕ.

Çурçĕр пайан çĕнĕ стройкă тийет,
Уншăн çĕршыв çĕн кулътурă уçларĕ.
Йурă мĕнне пĕлеймен самоед—
Вăл та йурра ĕнермешкĕн пуçларĕ.

9

Йурт, пăлан. Йурт хытă... хытă...
Санпала ман пурнăç пытăр:
Санпала тăрантăр хырăм,
Санпала тумлантăр арăм
Санпала йусантăр çурт,—
Йурт, пăланăм, йурт!

---

*) Северное сияние.

Йурт, пӑлан! Васка та—сик ес,
Ман ҫӗршыв кунта пит тикӗс,
Ес кунта пуҫна ач ус,
Еп сан хуҫу ескимос,—
Ман лава ес хытӑ турт,
Йурт, пӑланӑм, йурт!

10

Никам та килте пулмасть ак,
Пӳлӗмрен пуҫне. Пӗччен
Кантӑка уҫса йарап та
Ҫырап тинке тухиччен...

Хама рифмӑ пӑхӑнмасть-тӗк.
Чӑрманатӑп ҫӗвӗҫле.
Урама тухса пӑхмастӑп—
Урам мансӑрах ӗҫлет.

Кунӗпе шыранӑ ҫемӗ
Йухнӑҫем васкать чӗре.
Сӑвӑ тикӗс шунӑ ҫемӗн
Асилетӗп ҫурҫӗре.

Ҫурҫӗрпе ҫыхланнӑ тертӗм
Пуҫтарать пур хумсене.
Вӗсене кунта кӗртетӗп—
Ӑсататӑп вӗсенех.

Ҫыркалатӑп ирлӗн-каҫлӑн,
Сӑвӑсем йалан ҫумра.—
Сапланмасӑр йулнӑ аҫлӑк—
Сӑвва саплӑп туххӑмра

Кулленхипе ёлкĕретĕп-и—
Маншăн хатĕр—малали.
Сăвăç, тетĕп, хăт пелетĕн-и,
Мĕнчухлĕ ĕç сан валли!..

11

Ăçтан тĕллемерĕç
Пире пăшалсем,
Ăçта ĕçлемерĕç
Пирĕн алсем?—

Шавла-ха, тайга,
Васка йурлама,
Çитĕнет Вайгач,
Çитĕнет Йамал!

12

Ула пĕлĕт—шурă тинĕс хумĕ,
Катăк уйăх—пăлан măйраки,
Ескимос манăн çывăхри тус мĕн,
Сивĕ тундрă—мана тăван хир

Çурçĕртен асакан йурлă тăвăл,
Тахçанах ман йуратнă тăван.
Сурçĕрпе çил çинчен çырнă сăвă—
Еп тапратнă пĕр татăк кăвар.

Епех акă купта çул çӳревçĕ:
Маншăн паллă Седов, Амундзен
Маншăн паллă Чухновски вĕçевçĕн
Çурçĕрпе çӳрекен тусĕсем

Маншăн паллă кунти цурнăç çулĕ,
Хастарлă çăлтăрлă çĕрсем.
Мана сывăх, мана курнăçулă
Ескимосăн услап тутисем.

Çурçĕр, çурçĕр! Тăван йевĕр çурçĕр,
Анне пек йыпăнатăн мана.
Ескимосăн чуми—унăн çурчĕ
Мача ак хапăллат хăнана.

Кунта маншăн тĕреклĕх тийенчĕ,
Хăнăхтарчĕ стихийă вăйĕ.
Ку кунччен хама сăвăç теменччĕ—
Пайан сăвăç темешкăн хăйап.

Еп пĕлетĕп, пурах пирĕн тапхăр,
Епĕр çитĕпĕр полюс тĕлнех.
Çĕршыва çутатма хăвалатпăр
Етем ăспе-пĕлўне.

Кунта мĕнчул сăпавçă-çўревçĕ,
Кунта паллă Седов, Амундзен,
Кунта паллă Чухновски вĕçевçĕн
Çурçĕрпе çўрекен тусĕсем...

Хыçала йулакан пирĕн кам-ши—
Çурçĕр, çурçĕр, ăмăрт маларах,
Çавăнпа, ескимос, паллă йамшăк,
Пăлана хытăрах хăвала!..

13

Тинĕсрен йур вĕçет,
Тинĕсрен çакăнат çурçĕр каçĕ.
Ентĕркенĕ Мезен
Савăтпа çухăрат ирĕн-каçăн...

Пĕр хĕр, пĕр самант
Йулашки хут умран иртсе карĕ.
Йĕрсе мар, йĕрсе мар—
Кулсаҫех алă пачĕ Тамară.

Йумахри пек тĕнче
Хăй ҫине пăхтарса хуйха татрĕ.
Тепре килеччен—
Тенĕ пек йывăҫсем пăшăлтатрĕҫ.

Мезен мĕкĕрсе
Савăтсен хапхине уҫса йачĕ.
Хĕр куҫĕсем
Уйăрлу хуйхине сӳтсе пачĕҫ...

Уйрăлтăмăр, тесе—
Хĕр часах савăта кĕрсе карĕ...
Сывă пул кĕҫĕрлĕх,
Сывпул, ҫурҫĕр чечекĕ Тамарă!

# Хумсем

## ПОЕМĂ

Ах, йанкăс çĕр!
Йапшар куна çĕнтеретĕн тин ес,
Тин çĕршыва
Тĕксĕм чаршав каран...
Шăп çех хумпа
Канасшăн шурă тинĕс,
Шăп хумпалаваскасшăн
Мăн карап.

Çанталăк çутă.
Сывлăш тăрă çăл пек уçă.
Тин тулнă уйăх—
Тинĕс анĕпех!
Шыв тĕк тăмасть,
Ун çулĕ—кутăн-пуçăн,
Тин çех çырма пуçлас
Сăвăнни пек.

Шăпах тăрать
Çут çăлтăртан пуйан çанталăк,
Кичем шăплăх
Утланнă таврана...
Кун пек каçра
Каçа анчах пахалăн,
Çав каç илемшĕн
Савăнăн кăна.

Хумсем выђа-выђа
Карап çумне сикеççĕ,
Художник—шыв
Пĕлĕт сăнне çыратˇ.
Хыçран тарат
Тăлăх та пĕчĕкçеççĕ,
Качи-мачи пек
Тутăхнă çыран.

Йĕри-тавра,
Кунçулсăр сарăлнă хумсемшĕн
Ертел çинчи пек
Савăнас килет...
Анчах çак йанкăс каç
Хурланнă темшĕн
Мухтав пек типшĕм
Акăљчан поет.

Ăна паларăм еп:
Вилйам Джерри ун йачĕ,—
Çын тенисем,
Йатран тăраççĕ вĕт.
Вăл пĕччен мар,
Унпа хăрах тăлмачă—
Унпа актрисă
Мери Жозефи.

Мери чипер.
Тен, ун çинчен
Ыйтатˇ такам та:
Мĕнле çемйешĕн
Ӳснĕ-ши çак хĕр?--

Ăвăл кирлех мар.
Анчах телейшĕн мар тăр,
Джерри поет
Выртсах йĕрет кĕçĕр.

Хыçра йулат
Совет çĕршывĕ—ĕçлĕх тăванĕ;
Джерри пĕр уйăх
Пурăннă унта.
Ана ман çĕршывра
Пĕрех çул панă:
Кĕреш; ес пурăн
Талпăнса
Чунтан!

Вăл курнă тăр:
Кунта пур ĕççыни телейлĕ,
Кашни ĕçченшĕн ĕç—
Кашнишĕн çул;
Ĕçчен сыпра
Дикарлăх çук—чейелĕх,
Дикарлăхпа тăван
Ултав—хуççуҍ.

Совет çĕршывĕ
Тĕнче ăсĕ йусанă çул тăр,
Пĕтĕм малашлăх—ун;
Ăнлан та кур:
Никам курман илтмен
Çăтмах çук пултăр,—
Совет çĕршывĕ—
Ĕç çăтмахĕ пур.

Совет çĕршывĕ!
Йепле ку сасă çирĕп, çывăх;
Унта кашни кĕтес—
Чĕрĕ тымар.
Унта вăран часрах,
Вăран ан çывăр,
Хастарлă çирĕп
Шăнăра хытар...

„Мĕншĕн?“—йĕрет Вилйам.—
„Мĕншĕн калла кайатăп,
Мĕншĕн тип маншăн
Лондон та Йст-Ент?
Çук, çук!
Пĕттĕр, çухалтăр
Манăн йатăм,
Етем кунçулшĕн
Еп йĕмĕп ĕнтĕ.

Каллах выççи-шăнни...,
Ăçтан çиллӳ ан килтĕр!
Каллах çара хĕрсем
Кĕшĕл-кĕшĕл...
Ăнлан, ылханлă Англи,
Сан пирки тĕр,
Пайан мана
Пĕтĕм етемлĕх шел...“

Совет çĕршывĕ..!
Паллах, унта йулсассăн ырă,
Йуласчĕ ун...
Анчах ăçтан йулан?

Мĕншĕн тесен
Кунта Джеррин—йут вырăн,
Ун ашшĕ-амĕш
Йут мулпа пуйан...

Карап шăвать.
Совет çыранĕсем тараççĕ;
Çумра Мери кăтри çех
Вĕçкелет.
Карап шăвать!—
Чĕтрет майак-хуралçă,
Ун карапран часрах
Йулас килет.

Поет сăнать:
Каçхи пĕлĕт-чечеклĕ улăх,
Унта шупка кĕтӳç
Шăвать тепле...
—Сывпулăр, тет
Ăна Вилйам.—Сывпулăр...
Ак пăхăр
Йулашки ун ик куплет:

„Уйав пек çĕр
Карап çинчен татлать ман çулăм,
Çершыв, сана
Мĕскер çунам кĕçĕр?
Везувп йевĕр
Кăтăклă кунçулăм,
Сана, чăн мари-ши тем
Бертран Ресел?

Мĕншĕн мана
Хаљхи кунсем çуратнă, курнă,
Ман çĕршывра
Мĕнчул ултав, суйа...
Сывпул, сывпул
Харам çухалнă пурнăç,
Сывпул Джон-буљ,
Сывпул Мери.
— Вилйам"

Мери пĕлет:
Ăна куççуљ тапратнă темшĕн.
Вăл ĕмĕрлĕх
Çак пурнăçран тарать...
Анчах кĕрептĕр вăл
Хаљхи кунсемшĕн,
Кайран унпа
Мĕн пулĕ-ши вара...

2

... Шутлаттăм еп:
Мана пўрмен-тĕр ырлăх-йантă,
Тахçан еп хăнăхнă
Выçма-шăнма.
Çампа темчул
Чăрмав чăтап пулсан та,
Еп тин хама хам.
Улталасшăн мар.

Сынна вĕççĕр пăвать тĕк
Харпăрлăх трагеди.
Нумайĕшшĕн
Пĕр çăлăнăç—

Ерех.
Анчах ерех
Лăплантарма тытăнаŭ тĕк
Çак пурнăçра çул çук,
Çул—вилĕм çех;

Шутлаттăм еп:
Епĕр чылай сăнанă, курнă,
Етем сахал пĕлет,
Нумай суйаť;
Ман кунччепех
Сĕмсĕр тĕлĕк пек пурнăç,
Мункун утравĕ пек
Мĕлкереп пуйан.

Йĕрес тĕк йĕр,
Анчах чĕрŭ çинчен шăпах тăр,
Сурма тăмасť
Кашни етем чĕри.
Çампа иккен
Кăшт хытăрах сăмах та
Айван çынна
Йĕртет мĕн
Çав тери;

Шутлаттăм еп:
Анчах еп йăнăшнă,—
Ăнлантăм,
Етем харам шутлаŭ мĕн
Темĕн чул...
Мĕнчул шутлап,

Мӗнчул пӗлен пулсан та
Хай йӗрӗпех туртатӑ,
Йулташ кунҫул.

Хай, пурӑнӑҫ тени—
Йӑлтах ҫипуҫ та хырӑм,
Мӗнпур ҫавсем
Хирӗҫтерес ҫынна.
Мӗнпур ҫавсем пирки
Пурнаймӑн ыррӑн,
Мӗнпур ҫавсем
Пӗчченлӗхшӗн, ҫанах.

Ҫавсем пирки
Пуҫна чӗнмен тӗле чикетӗн,
Ху намӑсна сутан
Тӑшман тӗлнех...
Еп сӑвӑра мӗнчул
Ахаљ йӗрмен тӗр,—
Ман айӑпа
Редакци ҫех пӗлнӗ...

Пайан ак еп:
Йалйышӑмпа туслашрӑм хыттӑн.
Хыҫра Мезен,
Капкас,
Канаш, Вӑрмар...
Чылай йулташ паллана еп,
Ал тытнӑ,
Анчах Джерри пек
Йулташа курман!..

Пĕлмесп,
Тен, вăл çĕршывшăн
Макăрма вĕреннĕ;
Анчах етем кăмăлĕ
Хытă чух,
Джерри поет
Мана хăй ан хĕрхентĕр,
Еп Англи чури мар,
Пулас та çук!

Ман халăхпа
Пĕтĕм вак халăхсем пĕр тан-и,
Ăна пĕлмест-и
Глобус кÿлепи,—
Мана пĕрех!
Мĕнчул чура Британин,
Çавна таса пĕлетпĕр
Пит епир!

Унта-кунта колони,
Чурасем,
Плантаци,
Йунпа сăрланнă
Гибралтар хапхи...
Çынна çынах çăкăр памаç,
Шăптаççĕ,—
Çавна иккен,
Çавна хăтăр,
Тап, хир!

Вилме, йулташ, тăхта!
Вилĕм хăвнах кĕтет тĕр,
Вăл тиркес çук—

Ес ӑна шел-им?
Британи чапсӑр мар,
Мухтавсӑр мар,
Пӗлетпӗр:
Лорд Байрӑн та
Ӑста Шекспир,
Шелли...

Кермен тавраш,
Фонтан,
Бульвар нумай Британин,
Паллах тӑшман тени
„Хитре“ пулаӗ...
Ман йатӑмла
Унта тухма „вӑтанӑн“—
Чӑваш:
Вӗт-шак йалсем,
Йк-виҫ хула.

Анчах пайан Британи пек
Телейсӗр мар еп,
Тарлап пулсассӑн
Хамӑршӑн тарлап!
Ӗлӗкхи пек йухмасӗ
Ман йунӑм-тарӑм,
Чӗре суранӗ—
Татӑк ҫӑкӑрла.

Нихҫан-нихҫан
Ӗп макӑрса кӑтартмӑп урӑх;
Мана ҫӗнйал,
Ӳсен хула—тӑван.

Тĕпрен илсен—
Нихçан курман куљтурă.
Тăшман тенй
Пырса та ан çыхлан!

„Ăçта кăна çитем
Мана çанталăк пур пĕр;
Кирек ăçта та
Маншăн пĕр хĕвел—
Тинех, тинех
Ман çамрăк халăм
Пур пек,
Калас килет:
— Пĕтĕм çĕр-шыв, хĕрел!..

3.

Итле, тĕнче!
Çавра тăвăл хумсем пек çапăн,
Çиç вичкĕн çиçĕм,
Аслати кĕрле!—
Хăт мĕн хăтлан çанталăк,
Ав Октябĕр
Йĕри-тавра
Хĕвел пек хĕрелет.

Итле, тĕнче!
Ман çĕршывра
Çĕн савăт, трактăр,
Курман-илтмен
Ударлă ĕç хĕмĕ;
Çĕрти пур ирсĕр йĕммĕре хăпартăр
Ман çĕршывра
Бољшевикла ĕмĕр!..

Ӗмӗр-ӗмӗр йухтарнӑ,
Тӑкнӑ таршӑн йуншӑн
Ӗҫхалӑх ҫутӑ
Пурнӑҫа пурай!
Еп ӗҫ ачи
Хам ҫӗршывра пӗр уншӑн,
Пӗр уншӑн еп
Йурлатӑп ҫак йурра.

Пӗр уншӑн еп
Сывалнӑ пуҫӑма хуратӑп,
Ӗҫхалӑхшӑн салтап
Кашни тӗвве,
Итле, тӗнче!
Мана камсем йуратӗҫ,
Ҫавсем телейлӗ пулӗҫ,
Тетӗп еп.

Камсем мана йулташ,
Камсем манпа пӗр йышлӑ,
Кам ҫакӑ ҫутӑ
Пурнӑҫа пӗлет.—
Ҫавна анчах пайан
Йуратӑп, чыслӑп,
Ҫавӑн ҫинчен ҫех
Йурлама пӗлӗп.

Ман ҫӗршывра анчах
Хӗрӳ ӗҫпе хӗрелнӗ
Пур хапрӑк-савӑт,
Пур ӑна итем...

Кунта
„Етем вилме çуралнă“ темĕн,
Ăна Вилйам пекки
Каланă тем.

Çурхи хавас кунсем
Кантăксенчен пăхаççĕ,
Ăна хавассăн
Савăнса пăхам;
Çак сăввăма
Çырма пуçланă каçăм,
Пĕр маншăн
Лайăх тумтирне тăхăн!

Ман çĕршывра çук мар,
Пĕтмен сўп-çап таврашĕ:
Кахал,
Мешчен—ултавлă куçкĕски...
Анчах манпа вĕсем
Сахал тавлашĕç—
Ман май тăк—май,
Май мар тăк—
Сут кĕске!

Тăхта, тăшман!
Сан йулашки кунсем çитеççĕ.
Çак çĕр çинче
Çук саншăн тивĕççи;
Тăшмансăр кунçула
Куратпăр, теççĕ,
Чуралăхпа
Мăшкăлăхăн вĕçĕ

Анчах... Чăрсăр перам
Самай вутланнă тапхăр,
Ман кун çинчен
Сăмах пĕтет кĕскен...
Анчах сăввăм пĕтмест.
Таçта хум çапрĕ,
Карап çинче
Мĕн пулчĕ-ши,
Мĕскер?

4

Çĕклен, поэт!
Сывла, вутла сăмахăм, сывă,
Майла та ларт
Куплет çумне куплет;
Çак акăш-макăш
Чиксĕр тинĕс шывĕ,
Ăçта поемă
Хăвăлне пĕлет.

Хумсем йурлаç.
Вĕсем йурри таçта тарасшăн;
Хумсемшĕн йура—
Çывăхри хăна!
Пĕлмешкĕн çук,
Те ырăшăн-усалшăн,
Хыпар пек çил
Çăралчĕ кăшт кăна,

Карап шăвать.
Каçхи пĕлĕт хуралнă темшĕн,
Йĕри-тавра
Каçхи тĕттĕм,

Хура...
Вилйам тултан кĕмен.
Мĕншĕн кĕмен-ши,
Мĕскер сăнаť унта,
Мĕскер кураť?

Каçхи илем кичем.
Тахçан палубă пушă.
Таçта такамшăн
Жозефи йĕрет:
„... Хăвна хĕрхенĕр.—
Ах, мана хăрушă,
Хăш-пĕр çынсем
Санран телейсĕр вĕт...

Пайан планетă пирĕн:
Ик сĕмсĕр хĕрарăм:
Малти çут ĕмĕршĕн
Çунаť пĕри,
Тепри пайан
Хăй вилĕмшĕн хăранă,
Етем чăрсăр,
Ёмĕтсĕр“, тет Мери.

„Çак аслă тĕнчере
Пĕтĕм тăшман та
Йккĕн,
Ытти хисепсĕр
Пур пули-пулми...
Тинех кашни поет,
Актрисă, спикĕр
Çав ик тăшманшăн
Айакра пулмĕç!

Ан тив сан аçăрсем
Пĕтчĕр тĕнчешĕн йутă.
Ес вĕсене тĕпрен
Хирме пикен.
Кăшт саншăн та
Леш Епикур чăн пултăр...
Сана, еп, тусăм,
Пур вĕт шелекен..."

Мери калаТ.
Ун чакăр куçĕсем шывланнă.
Вилйам пӳне вăл
Ыталат хăйса...
Анчах вĕт пурнăç умĕнче,
Ăнланăр,
Хĕрарăмăн куççулĕ
Мĕн вăйсăр...

„Мĕншĕн йĕретĕн ес,
Вилйам?
Мĕншĕн йĕретĕн,
Ес пурнăçра
Чăнах та вăйсăр-ши?
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Кăшт тăхтасан
Тавçăртăмăр ĕретлĕн—
Темле çынна
Пытарчĕ чăрсăр шыв...

Карап шăватĭ!
Чĕмсĕр хумсем
Калла тараççĕ,
Çил ĕрĕхесшĕн пек

Тек вĕçкелет.
Карап шăват.—
Чĕтрет майак хуралçă
Ун карапран часрах
Йулас килет.

Хумсем çапаç... çапаç...
Вĕсен вăййи мĕн çака,
Ку вăйăран хăпма—
Таçта тăпса,—
Ку кĕрешӳшĕн çук
Чарак та йакăр,
Ку кĕрешӳ сыпăксăр,
Хăлăпсăр.

Мĕншĕн балкон кĕрлет:
„Ей, человек за бортом!"
Мĕншĕн такам ыйтат:
„Çăлăр!"
„Çăлăр!"—
Шывран тухса
Пурнас текен çын пур-тăр,
Пăхатăп еп—
Чипер Мери тăлăх...—

Вилйам шывра.
Вĕççĕр хумсем
Вĕççĕр çапаççĕ.
Вилйам шывра.
Карап шăват... шăват...
Вилйам шывра—
Умра ун вилĕм каçĕ;

—Вилйам шывра,—
Мери сăнат̆ шыва.

Пĕлĕт шăват̆
Театăртан çын тухнă йевĕр,
Шывпа асасшăн,
Иртĕнесшĕн çил...
Мери пăхат̆ мана:
„Кăна мĕн тийĕр,
Çакна етем,
Çакна поет теççĕ-и?..

Çурхи кунсем,
Çăлтăрлă каç,
Кăмăллă музăк
Шапшур чечекĕн пайăрки,
Ефир.—
Пайан сайра вĕсем,
Тирпейсĕр, хуçăк:
Çак çуртсăр тинĕс
Хумĕсем—епир!

Ей, աслă тинĕс!
Сан хумусем çинче çын авă,
Çын умĕнче сан вăйлă кĕрешӳ
Ан вил, Вилйам,
Хумсем çапнишĕн саван,
Кĕрешӳрен илемлĕ çул—
Тек çук...“

Мĕншĕн йĕрес?
Ĕçпе, поет,—
Ĕçпе пĕрлеш те

Никçан пуçна ан чик,
Ан ус:
Кашни поет
Ĕçхалăхшĕн кĕрештĕр,—
Кашнишĕн пурнăç пур—
Совет Сойузĕ.

Мĕншĕн йĕрес?
Пур вăйсăрлăх ылхантăр акă:
Вăл ĕçшĕн тӳртĕм
Йăласем йенчен

. . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . .

Çав вăхăтра
Карап кăтартрĕ:
—Чакăр!—
Вилйам мĕлки
Çĕкленчĕ хум çинчен...

—Вилйам! Вилйам:—
Ăна часах тăн кĕчĕ:
Йурĕ...
Вилмен пулсан еппин...
Ман пурăнас...
Анчах кун пек йăла
Кăтартмăп урăх....
Ман вирлĕрех
Çĕн çĕршывшăн тăрас!“

## ĂНЛАНТАРНИСЕМ.

**Йуртă.**—Ескимоссем пурăнакан хӳтлĕх

**Харей** — Пăлана хăваламалли хатĕр.

**Ист-Ент.**— Лондон хулинчи урамсенчен пĕри. Ăна хаҍхи вăхăтра ĕççĕр йулнисен йăви те теме йурать.

**Бертран Ресел.**— Пессимис-утопис. Вăл Англи буржуазишĕн паллă йат. Унăн „Научные Мировозрения" кĕнекинче: „Капиталисăм пĕтмеле теççĕ. Анчах вăл пĕтес выранне пĕтĕм етемлĕх пĕтсен аван пулмĕ-ши? Ман шутпа пĕтĕм етемлĕх пĕтсен канлĕрех пулать"--тенĕ вырăнсем пур.

**Джон-буљ.**— Англи патшалăхне шутле йĕкĕлтекен сăмах.

**Мункун утравĕ.**— Остров св. Пасхи. Унта арăш-пирĕш пысăк етем мĕлкисем пек чул сăртсем питĕ нумай.

**Спикĕр.**— Акăљчансем оратăрсене спикĕрсем теççĕ.

**Епикур.**— Авалхи грексен философĕ. Унăн—„Вилĕм вилнишĕн мар, чĕрĕ йулакансемшĕн хуйхă"—текен сăмахĕсене Карл Маркс час-часах калама йуратнă

**Стратотсферă.**— атмосферăн çийелти сийĕ.

**„Вилĕм йăлли"**— вырăсла „мертвая петля"

**Шаман.**— Çурçĕрти халăхсен йумăçĕ. Етеме улталас тесен вăл пуппа мулларан пĕрре те ӳксе йулман.

Редактор **Н. Васянка.** Техред. **А. Быков.**

Послано в производство 22/VIII—34 г., Подписано к печати 27/IX—34 г. Уп. Чувашлита 1431. Тираж 3100 экз. бумага 62х94/32 Заказ № 651 об'ем 2 печ. листа. В печ. листе 45.000 печ. знаков.

Отпечатано в Типографии № 3 Чувашгиза г. Цивильск.

Хакĕ 1 тенкĕ
Цена 1 рубль

Х—3

**И. ДУМИЛИН** Сборник стихов „ВОЛНЫ“

Чувашское Государственное Издательство
Чебоксары 1934